33-42
2230

ИВАН МАЛГАЙ

# СӐВӐСЕМ

ЧӐВАШГОСИЗДАТ • 1938

ЧӐВАШ
ГОСИЗДАТ
1938

*ИВАН МАЛГАЙ*

# СТИХОТВОРЕНИЯ

*

ЧУВАШСКОЕ
ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО
ЧЕБОКСАРЫ • 1938

*ИВАН МАЛГАЙ*

# С Ă В Ă С Е М

★

Ч Ă В А Ш С Е Н
ГОСУДАРСТВĂ ИЗДАТĔЛСТВИ
Ш У П А Ш К А Р ● 1 9 3 8

Редактор С. ЭЛЬГЕР.
Техн. редактор Ф. КОШКИН.

Послано в произв. 11-VI—38 г.
Подпис. к печати 11-VII—38 г.
Уполн. Чувашглавлита № 1597.
Заказ № 558. Тираж 2000 экз.
Формат бум. 60 x 92 1-32.
Об'ем 1,5 печ. лист.

г. Чебоксары, Дом печати,
Типография № 1 Чувашполиграфтреста.

## ПАРНЕ

Сарă хĕр пахчара тĕр тĕрлет йурласа,
Çĕнĕ кĕвĕ хитрен шăранать йурринче.
Вăл йурлать çĕршыва, пурнăçа ырласа
Колхозран пуçласа Кремĕле çитиччен.

Ун тулли питĕнче çутă кăмăл çиçет,
Хаваспа йăлкăшаç кулакан куçĕсем.
Хĕр ĕçлет. Таврара—çурхи йешĕл тĕнче;
Таврара - чечек çурнă шап-шур йăвăçсем.

Хĕр тĕрлет тĕррине йĕппине выљатса,
Катанпир çийĕнче ерешлет телейне.

Вăл йурлат̆ çакă çĕн пурнăçа ырласа,
Вăл йурлат̆ хушăран ылханса иртнине.

### ХĔР АМĂШĔН ЙУРРИНЕ АСА ИЛЕТ.

„Çуркунне, пĕр ирпе, пусмăрпа асапра
Ес çуралтăн, ачам, ман чĕкеçĕм.
Ес çуралтăн кăна—аçу кайрĕ вăрçа,
Çырусем ун темме çитейместчĕç..

Тек йĕреттĕм вара сан çине пăхсанах,
Мĕн пек тăвăрччĕçке хура пўрчĕ!
Çăпата кантрипе сиктерсе сăпкуна
Куç хупмасăр нумай каç çухалчĕ.

Пуйансем патĕнче куллен кун тарçăра
Асаплантăм та тўсрĕм еп мăшкăл.
Пуçне хучĕ аçу çав çулах вăрçăра,
Килеймерĕ киле пурăнмашкăн...

Хĕл иртсе çур килет-и, йем-йешĕл уйхир
Хресчене акана йыхăрат̆-и,—
Пирĕн çук ни лаши, ни акмалăх тырри,
Çын патне хутласа ывăнатăн.

Шăпа лекрĕ сана çавăн чух çуралма,
Йăвăр пулчĕç кунсем, ман чĕкеçĕм.
Ача чух савăнса выљама та кулма
Çук, пĕлмерĕн пачах, хĕрĕм, есĕ".

## ХĔР ХĂЙ ÇИНЧЕН ЙУРЛАЋ.

„Шартлама сивĕ хĕл. Çĕтĕк-çатăк тумпа
Еп утап масар урлă имшеррĕн.
Хам аннен тăприне шыраса еп унта
Тăлăх кайăк чĕппи пек çӳрерĕм.

Епĕ тупрăм ăна. Анчах кам шăтăкран
Тăрайса тухни пур тепĕр хут кайала?..
Ех, аннеçĕм, аннем! Хĕнхурпа асапрах
Иртрĕ санăн ĕмрӳ, тӳсрĕн ес мăшкăла...

Сан тăпру путиччен хĕвел тухрĕ умма,
Вăл хĕвел пулчĕ пирĕн Октябĕр.
Хĕвел тухрĕ умма! Çуттипе çĕршыва
Пур йенчен те вăл ăшшăн çутатрĕ.

Ман чуна, асаппа тулса ларнă ăша
Кайăксен йуррипе чӳхесе уçса йачĕ.

„Асапрах вилсе выртăп“ текен шухăша
Сирсе йачĕ йăлтах ун хăвачĕ.

Унтанпа çирĕм çул сар хĕвел çутатать.
Аслă Сталин пире ӳстерет йуратса.
Чечекленчĕ çĕршыв, хурçăланчĕ хула,
Йем-йешерчĕ уйхир тырпулпа кашласа.

Шуçăмран шуçăма çĕнĕ ӳсĕм тухать,
Кашни пирĕн тăвать хăй йуратнă ĕçне.
Кашни пирĕн илет халь ĕçре чыслă йат,
Кашнийех пурнăçлать ĕмĕрсен ĕмĕтне.

Çурхи савăк çĕршыв йешĕрет таврара,
Хĕвел тĕрĕ çине тăкать çут шевлине.
Сат тулли чечексем йешĕреççĕ умра,
Еп саватăп вĕсен ытарми шăршине.

Ман хама чечекрен уйăрассăм килмест,
Çурхи йешĕл чечек тетĕп епĕ хама.
Тӳпене тухăçран сар хĕвел çĕкленет,
Тытăнать вăл мана ăшшипе лăпкама...

Манăн шухăш вара ыткăнать инçете,
Инçете, аслă, ирĕк çĕршыв хĕрринех.

Самантрах вăл сатран ыткăнат̆ те ҫитет̆
Чун савни пурнакан Тухăҫри чикĕне.

Ман савни икĕ ҫул чикĕре пурăнат̆,
Шљом ҫинче йăлкăшат̆ хĕрлĕ ҫăлтăр:
Икĕ ҫул вăл ĕнтĕ сывлăшра йарăнат̆.
Савнă љотчик, савни ҫывă пултăр!

* * *

Астăвап: йур тасалчĕ ҫĕршыв питĕнчен,
Ăҫта килчĕ унта йешĕрет симĕс курăк.
Ушкăнпа тыр акатпăр колхоз хирĕнче,
Тўпере тăррисем шăратаҫ савăк йурă.

Плугпала сухалатпăр хире савнипе;
Ман хыҫран вăл пырат̆ те калат̆: „йурататăп“...
Урлă-пирлĕ выртан йăрансен ĕмрине
Тĕппипе аркатса еп мăнаҫлăн утатăп.

...Лăпкă каҫ. Ҫулҫăсем ал ҫупаҫҫĕ хуллен.
Кунĕпе ĕҫлесе те епир ывăнман,—
Тухса ларнă туспа йешĕл сат-пахчине
Пĕр пĕрне йуратса чĕререн калаҫма.

Сӳтсе-йавнӑ епир пӗр-пӗрин ӗмӗтне,
Пӗр-пӗрне ӗмӗрнех йуратма сӑмах панӑ.
Вӑл калаӗчӗ: „Кайап Хӗрлӗ ҫар ӗретне,
Ҫитес ҫул ҫырусем ҫырмалах, — тетчӗ, —
санӑн“.

Вӑхӑт ҫитрӗ йухса, савни карӗ ҫара.
Ҫырусем умлӑн-хыҫлӑн килеҫҫӗ.
Икӗ ҫул вӑл сыхлаӗ тӑшманран ҫӗршыва,
Ҫӑхансем кунтала, ҫук, вӗҫеймӗҫ!

Пӗр-пӗр каҫ хуралта тӑнӑ чух чикӗре
Сӗм вӑрман кашласа ӳлесен те,
Ун таса куҫӗсем мӗнпурне витӗрех
Палӑртаҫ те кураҫ, еп пӗлетӗп.

Йе вӑрманӗ сасартӑк пулаӗ-и шӑпах,
Йе Амур ҫуталаӗ хускалмасӑр,—
Ман савни шанас ҫук нимӗнле шӑплӑха,
Вӑл сыхлаӗ ҫӗршыва куҫ хупмасӑр“.

* * *

Хӗр тӗрлет тӗррине йӗппине выљатса,
Катанпир ҫийӗнче ерешлет телейне.

Вăл йурлат çак хавас пурнăçа ырласа,
Тав туса, мухтаса халăхсен çулпуçне.

„Ман умра — шурă пир, шурă пир çиййĕнче
Кĕмĕл пек çуталса йухан шыв тăсăлат.
Ман çĕршыв йешĕрет шурă пир çиййĕнче,
Йешĕрет Тухăçран Кăнтăра çитиччен.

Ку çĕршыв — ĕççыннин, кунта çук тек асап,
Пит хавас йанăрат кунта йурă.
Ирĕк халăх кунта пурăнат савăнса,
Пусмăр çук, мăшкăл çук кунта урăх.

Ку çĕршыв çиййĕнче пирĕн хĕрлĕ йалав
Телейе кăтартса вĕлкĕшет ирĕкре.
Аслă Сталин — хĕвел çутатат çĕршыва,
Ăшшăн-ăшшăн пăхса ўстерет вăл пире.

Ак, çĕршыв çийĕпе йарăнат самолђот,
Тухăçран Анăçа çул тытат.
Самолђот парнас çук нимĕнле тăвăла,
Малалах çул уçат вăл, вăл пирĕн хăват.

Вăл çўлтен кĕрлесе иртнĕ чух малала
Еп пăхап та ăна, асилеп тусăма.

Тусăм лӗотчик пулни хăпзртатӑ кăмăла,
Татах вăйлăн савап еп ăна.

Çĕршыв ывăлĕ вăл. Тăшманран çĕршыва,
Савнă тус, хуралла есĕ çирĕп!
Сан валӗлӗиçке тĕрлет çак тĕрре, йурласа,
Сана хыт савакан колхоз хĕрĕ.

1937 ç.

## ÇУЛПУÇНЕ

Вăл пире тăван пек хисеплерĕ,
Пĕтĕм халăх йуратаĭ ăна.
Манас çук нихçан та ăна епĕр,
Манас çук нихçан та Сталина.

Вăл пире çĕршывăн хуçи турĕ,
Тулăх пурнăç пачĕ вăл пире.
Вăл—хаваслă çутă пурнăç пирĕн!
Унăн йачĕ пирĕн чĕрере.

Вăл пире хаваслă йурă пачĕ,
Пирĕншĕн култарчĕ хĕвеле.

Вӑл—пуйан тӑван ҫӗршыв хӑвачӗ,
Вӑл ӗҫхалӑх хӑвачӗ, телей!

Вӑл пире ҫӳлтен-ҫӳле хӑпартрӗ,
Вӑл ҫитерчӗ Ҫурҫӗр полюсне.
Вӑл пире ӳстерчӗ тимлӗн, пачӗ
Чи телейлӗ пурнӑҫ саккунне.

Вӑл пире хӗвеллӗ ҫул кӑтартрӗ
Аслӑ гени—Ленинпа пӗрле.
Епӗр йаланах ӑшра усратпӑр
Унӑн чаплӑ мухтавлӑ йатне.

1937 ҫ.

## ОКТĂБЕР КУНĔ

Пусмăра тĕп турĕ вут Октăбĕр,
Ирĕк пурнăç пачĕ халăха.
Пайан епĕр чыслăн уйавлатпăр
Ирĕк пурнăç панă çак куна.

Епĕр Хĕрлĕ плошчăтпе иртетпĕр
Çĕнтерӳлĕ паттăр утăмпа.
Аслă Сталин патне çитеретпĕр
Чĕрери чи ăшă салама.

Питсем пирĕн йăлкăшса çиçеççĕ
Кĕр хĕвелĕн çутă шевлипе.

Çӳлте хурçă кайăксем вĕçеççĕ
Хурçă саслăн ушкăн-ушкăнпе.

Пултарулăн, ирĕккĕн вĕçеççĕ.—
Çĕршыва ан хапсăнтăр тăшман.
Йалкăш, йалкăш пусмăрти тĕнчешĕн,
Вут Октябĕр çулăмĕ йалан!

Аслă Ленин! Çутă пурнăç пачĕ,
Çĕнĕ пурнăç пачĕ вăл пире.
Тулăх пирĕн пурнăç! Сталин йачĕ
Ĕмĕр-ĕмĕр пирĕн чĕрере.

Пусмăра тĕп турĕ вут Октябĕр,
Ирĕк пурнăç пачĕ халăха.
Пайан епĕр чаплăн уйавлатпăр
Ирĕк пурнăç панă çак куна,

1937 ç.

## ТЕЛЕЙЛӖ ЕПИР!

Ҫӗршыв чечек ҫурчӗ, йешерчӗ хитрен,
Тӳлеккӗн лӑпкаҭ ӑшӑ ҫил питсенчен.
Йанраҭ савӑк йурӑ Совет ҫӗрӗнче,
Йанӑраҭ кӑнтӑртан ҫурҫӗре ҫитиччен.

Аван пирӗн пурнӑҫ, телейлӗ епир!
Хаваслӑн ӳсет ҫамрӑк йыш куллен-кун.
Ҫӗнелчӗ хулийӗ, ҫӗнелчӗ уйхир,
Ҫӗршыв тӑхӑнайрӗ илемлӗ ҫӗн тум.

Тухаҭ хурҫӑ трактӑр колхоз уйхирне,
Тӗпрен ҫӗнетет вӑл йӑрансӑр хире.

Текех сухапуç, курпунне кукăртса,
Унта çӳрес çук ширлĕксем хăварса.

Пилот хирсем урлă, сăртсем çийĕпе
Хăйулăн вĕçет кăнтăртан çурçĕре.
Тăраç çумма-çуммăн, хурçă хӳме пек,
Çĕршыв ывăлĕсем ир те каçчикĕре.

Таçта хыçа йулнă тискер ĕмĕрсем
Нихçан та текех çĕршыва килес çук.
Утар малалах тăшмана çĕнтерсе,
Паха тулăх пурнăç туса пынă чух!

Аван пирĕн пурнăç, телейлĕ епир!
Хаваслăн ӳсет çамрăк йыш куллен-кун.
Çĕнелчĕ хулийĕ, çĕнелчĕ уйхир,
Çĕршыв тăхăнайрĕ илемлĕ çĕн тум.

1937 ç.

## ЙУРЛАС КИЛЕТ

Йурлас килет пĕр вĕçĕмсĕр, йурлатăп савăнса!
Ман йуррăмсем йанра-йанра çĕршыв тăрăх
йухаççĕ.
Хăйулă сас чĕре панчен тухаť ман шăранса,
Çĕн ĕмĕтсем çитсе кĕреç чĕре патне хавассăн.

Чĕре тулли хаваслăхăм! Умра кулаť хĕвел.
Ун шевлисем ачашланса савни пек чуп тăваççĕ.
Ăçта пыран, ман çĕршывра пуриншĕн те телей,
Пуриншĕн те пĕрпек тăраť çунан хĕвел хăвачĕ.

Еп тухнă каччă шутĕнчен, еп çамрăк мар,
анчах

Хӗрӳлӗ йурату ҫулӑмланаӗ татах та ман
кӑварлӑн.
Саватӑп епӗ ҫӗршыва, саватӑп пурнӑҫа;
Вӗсем ҫинчен ҫамрӑкланса мӗн пур саспа
йурлатӑп.
Тин ӳснӗ ҫамрӑк хӗрсене сӑнатӑп вӑйӑра,—
Ҫӗмӗрт ҫеҫки татса илсе кӑкӑр ҫине ҫакаҫҫӗ;
Ал-алӑн тытӑнса хавас йурлаҫҫӗ урамра,
Телейлӗн ҫитӗнеҫҫӗ, телейлӗ пурӑнаҫҫӗ.

Йурлас килет пӗр вӗҫӗмсӗр, йурлатӑп савӑнса!
Ман йуррӑмсем йанра-йанра ҫӗршыв тӑрӑх
йухаҫҫӗ.
Хӑйулӑ сас чӗре панчен тухаӗ ман шӑранса,
Ҫӗн ӗмӗтсем ҫитсе кӗреҫ чӗре патне хавассӑн.

1938 ҫ.

## ПИРӖН САЛАМ

Салам сире, Папанинсем, чӗре тулли салам
пиртен!
Сирӗн манми йатӑрсемпе кашнийӗн чунӗ
хӗпӗртет.

Мӗнпур тӗнченӗн умӗнче аслӑ ҫӗршыв
сирӗнпеле
Хӑй хӑватне тепре кӑтартрӗ чи чаплӑ пысӑк
ӗҫӗпе.

Тӑвата вӑй, тӑвата паттӑр—есӗр—ҫӗршыв
ывӑлӗсем

Вĕçтертĕр Сталин йалавне малтанхи хут
Полђус çинче.
Малтанхи хут сирĕнпеле сив Полђус пăрĕсем
çине
Телейлĕ пурнăçăн хĕвелĕ ўкерчĕ çутă
хĕлхемне.

Хайар çилсем тепле урсан та; есир пачах та
шикленмен.
Сирĕн тĕллев пулса йалан: çĕнтермеле çурçĕр
вăйне!

Çĕнтертĕр есĕр çурçĕре те кăтартрăр пирĕн
вăйхала,
Сире мĕнпур çĕршыв ĕççынĕ савса тăванлăн
саламлаť!

1938 ç.

*
* *

(Сабий майлă)

Çитсе кур ман йала, есĕ пулăн хăна.
„Вăй“ колхоз уйхирне илсе тухăп сана.
„Вăй“ колхоз сăрине еп ĕçтерĕп сана.
Çитсе кур ман йала, есĕ пулăн хăна.

Инçете тăсăлан колхоз хирĕ тӳрем,
Тырă-пулă парса вăл пуйтарчĕ пире.
Ун çине ес пăхса килленсе çеç çӳре!
Инçете тăсăлан колхоз хирĕ тӳрем.

Пире хăруш мар нимĕнле çилтăман;
Епир вĕсене пĕр хутчен çеç курман!
Хайаррăн урса хăратаймĕ тăшман.
Пире хăруш мар нимĕнле çилтăман.

Çурхи лăпкă ăш çил уççăн, уççăн вĕрет.
Ей, çĕклен çӳлерех, пирĕн хĕрлĕ йалав!
Сана епĕр нихçан парас çук йут алла.
Ей, çĕклен çӳлерех, пирĕн хĕрлĕ йалав!

Хĕвел култăр йалан шевлипе çуталса,
Татах ӳстĕр уйхир, тырă пултăр ăнса.
Ман çĕршыв сыннисем пурăнаç савăнса.
Хĕвел култăр йалан шевлипе çуталса.

Çитсе кур ман йала, есĕ пулăн хăна.
„Вăй“ колхоз уйхирне илсе тухăп сана.
„Вăй“ колхоз сăрине еп ĕçтерĕп сана.
Çитсе кур ман йала, есĕ пулăн хăна.

1938 ç.

## САМОЉОТ ИРТНӖ ЧУХ

И, хӗвел те хӑпарать, хӗвел хӑпарать
Сат-пахчийӗ тавра ҫаврӑнса.
Кӗмӗл сывлӑм йӑлтӑрать пахчара
Ахах шӑрҫа пекех йалкӑшса.

И, тусӑм та иртет пуљ, тусӑм иртет пуљ,—
Самољотӑн сасси илтӗнет.
Сывлӑшра вӑл хыватъ вӑрӑм ҫул;
Вӑл хыватъ ҫӗнӗ ҫул инҫене.

И, ҫуратъ те сывлӑша, ҫуратъ сывлӑша,
Йал-хир урлӑ инҫе ҫул тытатъ,

Мӗттор шавӗ йанратать ҫӗршыва,
Кӑтартать вӑл пирӗн хӑвата.

И, тухса курсамччӗ, тухса кур, аннем,—
Пӳрт тӗлнех ҫывхарчӗ самолет...
Вӗҫтеретпӗр йалав пек тутрине,
Ыр сунатпӑр вӗҫме малала.

1937 ҫ.

## ТӐВАН ÇĔРШЫВ

Йем-йешерчĕ çĕршыв, чечекленчĕ тинех!
Халӑхсем кунта тупрĕç хӑйсен телейне.
Пур çĕрте те кунта йалкӑшать çут хĕвел,
Пур çĕрте те хавас, пур çĕрте те илем.

Пур çĕртех хĕрӳ ĕç. Карапсем тинĕсре,
Рейса тӳрĕ тытса, çул хываç малала.
Чикĕрен кунтала тӑшмансем кĕресрен
Пирĕн паттӑр сынсем çĕршыва хураллаç.

Пĕлĕтре, çуталса, хурçӑ кайӑк иртет,
Парашӳт уçӑлать çамрӑк хĕр аллинче...

Тулăх пурнăç пирте, савăк пурнăç пирте!
Халăхсем ав, йурлаççĕ çулпуçĕ çинчен.

Йанратаççĕ вĕсем йуррипе сывлăша,
Тав тăваççĕ вĕсем чĕререн çулпуça.
Çĕршывра пур çĕртех йалкăшать çут хĕвел,
Çĕршывра пур çĕртех тулăх пурнăç, телей!

1938 ç.

* * *

Кун пек çĕршыв халĕ кам, ăçта-ха курнă,
Хăш çĕршывра йалан хаĕ çуркунне!?
Тусăм, пăхсам, телейлĕ пирĕн пурнăç,
Çĕршыв йурлат хаваслă йуррине.

Çĕршыв ĕçлет хаваслăн та телейлĕн,
Çĕршыв таçта та тулăх йешĕрет.
Тăван çулпуç—çĕн пурнăçăн хĕвелĕ
Таçта та ăшшăн çутатат пире.

1936 ç.

* * *

(Ачасен сӑвви)

Ҫӗршыван йем-йешӗл чечекӗ епир,
Хӗрӳлӗ Октӑбӗр ҫитсессӗн епир
Шӑтса ҫеҫкеленнӗ. Пире нихӑҫан,
Пире нихӑҫан пусмӑрлаймӗ тӑшман.

Ӳсетпӗр хаваслӑн Совет ҫӗрӗнче,
Выљатпӑр, кулатпӑр хӗвел шевлинче.
Йуратнӑ аттеҫӗмӗр Сталин пире
Ачашшӑн та тимлӗн пӑхса ӳстерет.

1938 ç.

* * *

Ĕмĕтĕм пулсаччĕ пирĕн таран, пысăк,
Ирĕклĕхшĕн епĕр çуннă сахал мар...
Кĕтнĕ ĕмĕт çитрĕ! Тусăм, савнă тусăм,
Çĕршывра халь епĕр мĕскĕн чура мар.

Ирĕккĕн сывлатпăр, кăкăрсем те çирĕп.
Пурăнмашкăн савăк, пурăнăç аван!
Йалкăшать илемлĕн çĕнĕ пурнăç ирĕ,
Çутатать хĕвелĕ ăшшăн çĕршыва.

Савăнса ĕçлетпĕр, савăнса пурнатпăр,
Савăнса йурлатпăр епир çĕршывра.
Сталина мухтатпăр, ăшшăн тав тăватпăр
Ăна чи хаваслă çĕнĕ йурăра.

1936 ç.

## ХӖР ЙЫХРАВӖ

Йарӑмланса хӗвел ансан
Килсемччӗ ман пата.
Пӳрт умӗн шӑппӑн шӑхӑрса,
Иртсемччӗ ес сата.

Еп ларӑп чӳрече уҫса,
Ес пырасса кӗтсе.
Еп ларӑп шӑппӑн йурласа,
„Савап сана“ тесе.

Еп ларӑп шӑппӑн йурласа,
Ес кӗрӗн пахчана.

Хаваслăн сан патна тухса,
Ал парăп еп сана.

Сар уйăх тухĕ çуталса
Çурхи сат хӳттипе.
Пире те тупĕ шыраса,
Çутатĕ çуттипе.

Йанратĕ шăпчăк йуррине
Турат çине ларса.
Ес калăн: пурнăç—çуркунне!—
Çĕн кунçула савса.

Йарăмланса хĕвел ансан,
Килсемччĕ ман пата.
Пӳрт умĕн шăппăн шăхăрса,
Иртсемччĕ ес сата.

1937 ç.

* * *

Еп кӗтӗм шӑппӑн каҫхине
Колхозӑн йешӗл пахчине.
Кӗтсе тӑратӑп савнине...
    Шӑпчӑк йурлать...
    Ах, сывлӑш уҫӑ!

Пахча шап-шурӑ ҫеҫкере,
Пахча илемлӗн йешӗрет,
Пылак та тутлӑ шӑрш кӗрет.
    Шӑпчӑк йурлать..
    Ах, сывлӑш уҫӑ!

Ес тухрăн, тусăм, пахчана,
Ал патăн савнăçлăн мана.
Уйăх çутатрĕ таврана...
        Çанталăк тăрă,
        Сывлăш уçă!

1937 ç.

## КАЙАС УМĔН

Ĕçлерĕмĕр йалан пĕрле,
Пĕрлешнĕ мăшăр йевĕрлех,
Колхоз хирне ĕçе тухсан,
Чуну хавасчĕ, тусăм, сан.

Епир ĕçлеттĕмĕр уйра,
Йышпа тăсаттăмăр йурра.
Хитреччĕ кăн-кăвак тӳпе,
Курнаҫчĕ çутă кантăк пек.

Халĕ Хĕрлĕ çар мана кĕтет,
Кĕтет мана вăл хурала.

Ан ман хăйула йĕкĕте,
Сывпул, савни, ман каймала.

Еп –халăх ывăлĕ. Çĕршыва
Еп сыхлăп тимлĕн тăшманран.
Еп манмăп нихăçан сана,
Ес илĕн çырусем манран.

1936. ç.

## КАЧЧĂ ЙЫХРАВĔ

Савнă шăпчăк-йурăçă
Йурă пуçарсан,
Пит те аван пулĕччĕ
Ес сата тухсан...

Епĕ вулăп сан çинчен
Çырнă сăввăма.
Уçса парăп сана еп
Пĕтĕм чунăма.

Сатри кӳлĕ те унчух
Лăпланĕ лăштах.

Епĕ вулăп...Тусăм, ес
Тулăн шухăшпа.

Епĕ вулăп... Куçăма
Илмĕп сан çирен.
Пĕр сана çеç,тусăмçăм,
Саваť ман чĕрем.

Савнă шăпчăк-йурăçă
Йурă пуçарсан,
Пит те аван пулĕччĕ
Ес сата тухсан.

1937. ç.

* * *

Шăнкăр-шăнкăр—кĕмĕл саслăн
Шыв йухса выртаĕ.
Ай, ларар-и, савнă тусăм,
Çакă çырăна.

Ай, ларар-и те сăнар-и,
Шыв ăçта васкаĕ.
Тусăм, шухăша кайар-ха
Ун çине пăхса...

Йурату, çук, йухса каймĕ
Пирĕн çак шыв пек.
Еп сана йуратăп, тусăм,
Ĕмĕр тăршшипех.

1937 ç.

* * *

Çурхи хӗвел çӗкленнине,
Мерчен пек сывлăм çуннине,
Чечек хитрен çурăлнине
Пăхсам, пăхсамччӗ, савнă тусăм!

Тем-тӗрлӗ тӗслӗн çурăлса,
Йе хӗрелсе, йе шуралса
Вăл, тутлă шăршă кăларса,
Йем-йешӗрет ав, савнă тусăм!

Йал çумӗнчи çăкалăхра
Хаваслăн, уççăн паçăрах

Пуçарчĕ шăпчăк ав, йурра...
Итле ăна ес, савнă тусăм!

Хĕвел тухаť. Çурлаť чечек.
Кулса тăраť çурхи тĕнче.
Мĕнпек телей! Илем мĕнпек,
Çак çĕршывра, йуратнă тусăм!

1937. ç.

* * *

Атăл тăрăх пăрахут иртет-и,
Чăшăл-чăшăл—хумсене сирет-и?—
Сирет!

Шупашкар тĕлне çитсен чарнат-и,
Пире хăй çине ларма йыхрат-и?—
Йыхрат!

Палубă çинче сар хĕр тăрат-и,
Ман çине пăхса йăл-йăл кулат-и?—
Кулат!

Уншăн ман чĕрем хыпса çунат-и,
Паллашмашкăн унпала йурат-и?—
Йурат!

Çĕршывра телейлĕн вăл ӳсет-и,
Ĕмĕтне пурнăçлама пĕлет-и?,—
Пĕлет!

Питĕнче хаваслăх ун çиçет-и,
Хай патне пыма пире чĕнет-и?—
Чĕнет!

1937.

## ПОЕТ

Асап та хӗнхур аслӑ Руҫ ҫӗрӗнче
Хӗснӗ чухӑна ҫӗр айне кӗриччен,
Пытарнӑ тискер патшасен тарҫисем
Телей ҫутине пусмӑрти ҫынсенчен.

Ӗҫхалӑхӗсемшӗн ӳсмен чечексем,
Туллин йешӗрсе ҫуркунне те килмен.
Асаплӑ, хӗнхурлӑ ӗҫчен халӑхсем
Ҫурхи хӗвелпе савӑнса килленмен.

Хайар, тискер ҫил ӳлесе талккишпе
Ӗҫхалӑхне пӳлнӗ саспа йурлама.

Ăшран шăранса тухакан кĕввипе
Ăна йăвăр пулнă ун чух ыр пулма.

Чипер ӳсекен пахчари йăвăҫа
Аҫа пĕр ҫапса ҫунтарса йанă пек,
Тĕп тунă унчух темĕнчул сăвăҫа
Патша хăйĕн ирсĕр, тискер аллипе.

Тискер тапхăрта ес ҫуралнă, Некрасăв,
Ҫуралнă та ӳснĕ тискер тапхăрта.
Ҫапах та патша тĕрминчен хăрамасăр
Йурланă ес уҫҫăн, чăн-чăн сасăпа.

Нумай сăвăсем чĕререн ҫунса ҫырнă,
Хресчен пурнăҫне хĕрхенсе чунупа.
Куҫҫуль йухтарса ес хăйулăн йурланă
Патша пусмăрне чĕререн ылханса...

Тĕп пулчĕ хĕнхур! Сан тăрасчĕ пайан,
Асап та хĕнхур Раҫҫейре пĕтнĕ хыҫҫăн,—
Курăттăнччĕ ес,—пурнăҫ камшăн аван,
Кам йурри шăранаĭ кунта уҫҫăн!

Пайан сан умна пур ĕҫхалăхĕсем
Тухăччĕҫ телейлĕн, хаваслăн утса

Кучух саванса пурӑнаҫҫӗ вӗсем,
Телейлӗ ҫӗршыван хуҫийӗ пулса.

Чӗнеттӗнччӗ есӗ ҫӗн пурнӑҫ тума,
Курасшӑнчӗ есӗ, поет-демократ,
Телейлӗ те тулӑх сывлан ҫӗршыва,
Телейлӗ те савӑк ӳсен ӑрӑва.

Сан вырӑна килнӗ сӑвӑҫсем сана
Калаҫҫӗ пайан: пирӗн пурнӑҫ аван!
Телейлӗ епир, пирӗн чун савӑнаť!
Пирӗнпе хаклӑ Сталин йалан!

1938 ҫ.

Хакě 85 пус.
Цена 85 коп.

ИВАН МАЛГАЙ
*СТИХОТВОРЕНИЯ*

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ 1938